25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 29 ЫТЛАРИКУН 300(6235) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

СТАЛИНГРАДРАН КĂНТĂРАРАХРА ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ НАСТУПЛЕНИ ТĂВАÇÇĔ

Декабрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинградран кăнтăрарахра, Котельниково еннелле ăнăçлă наступлени туса пырса, 20—25 километр малалла кайнă тата халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, вăл шутра район центрĕ ЗАВЕТНОЕ, ВЕРХНЕ-КУРМОЯРСКАЯ, НИЖНЕ-ЯБЛОЧНЫЙ, МАЙОРСКИЙ, НАГОЛЬНЫЙ, КАРАИЧЕВ, КРАЙНЯЯ БАЛКА, ПОПЕРЕЧНЫЙ, БУДАРКА, КРЫЛОВ, ШАБАЛИН, НОВО-ИЛОВЛИНСКИЙ, НИКОЛЬСКИЙ, КИСЕЛЕВКА, КИТЧЕНЕРЫ, КИЧКИНО тата чугунçул станцисем: НЕБЫКОВСКАЯ, ГРЕМЯЧАЯ, КУРМОЯРСКИЙ.

Тăватă кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем мĕнпурĕ 60—85 километр малалла кайнă.

Декабрĕн 28-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тытăна илнисен хисепĕ çак участокра 3.500 çынна çитнĕ.

Пирĕн войскăсем декабрĕн 12-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче çак участокра тытса илнĕ: танксем—60, тĕрлĕ калибрлă орудисем—155, автомашинăсем—105, боеприпассен склачĕсем—2. Пĕтерсе тăкнă: самолетсем—278, танксем—427, тĕрлĕ калибрлă орудисем—221, минометсем—85, пулеметсем—537, автомашинăсем—877, тĕрлĕ складсем—15.

Çав вăхăт хушшинчех противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 17.000 çын пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Çулпуçăн саламĕ татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума чĕнет

Паянхи хаçатра Сталин юлташ пирĕн республикăри колхозниксене тăванла саламласа тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туса çырнă телеграмма пичетленет. Çавăн пекех Сталин юлташ Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсене те саламлать.

Çакă вăл паха та савăнăçлă хыпар. Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи колхозниксем, Тамбов облаçĕнчи колхозниксен тата Саратов облаçĕнчи Ферапонт Головатый колхозникĕн пуçарăвне пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илсе, танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума 31 миллион та 552 пин тенкĕ укçа пухнă. Хĕрлĕ Çар валли çапăçура кирлĕ хĕçпăшал тума укçа-тенкĕ пухас ĕç кунран-кун сарăлса пырать. Халĕ аслă çулпуçăн саламне илнĕ хыççăн çак патриотизмлă пысăк ĕç татах хăватланса кайĕ. Çакна ăна районсемпе колхозсенчен тăтăшах килсе тăракан хыпарсем çирĕплетсе параççĕ.

Тăван çĕршывшăн йывăр кунсем килсе тухнă чухне яланах пирĕн халăх хăйĕн аслă патриотизмне кăтартса панă. Ферапонт Головатый колхозникĕн пуçарăвĕ тата ун хыççăн сарăлса кайнă юхăм пире, совет çыннисене, Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский вăхăчĕсене, пирĕн асаттесен геройла кунĕсене аса илтерет. Ют çĕрсене тытса илме капăрса пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа килекенсене хирĕç пирĕн халăх яланах пĕтĕм çĕршывĕпе пухăнса çĕкленнĕ.

«Пĕтĕм халăха çĕклемелле. Хамăрăн пĕр хулашăн кăна мар, Чулхулашăн кăна мар, пĕтĕм вырăс çĕршывĕшĕн çĕклемелле... Халăх ополченине пĕтĕм мирпе çĕклемелле, укçа-тенкĕ пухмалла — тупăсем шăратма, тăхлапа тар хатĕрлеме... Нимĕн те хĕрхенсе тăрар мар. Кирлĕ пулсан хамăрăн килсуртсене сутăпăр, тăван çĕре ылханлă тăшмансенчен хӳтĕлеме хамăрăн мĕнпур пуянлăхсене парăпăр». Çапла чĕннĕ Кузьма Минин, пĕтĕм халăха хăй малтан пример парса.

Халĕ, отечественнăй вăрçă кунĕсенче, пирĕн халăх хăйĕн аслă çĕршывне, хăйĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхне, хăйĕн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварассишĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешет. Социализмлă çĕршыв пире ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç, чăн-чăн этем тивлетне панă, çавăнпа халĕ, унăн умне хăрушлăх тухса тăнă чухне, эпир тăван çĕршывшăн нимĕн те хĕрхенсе тăмăпăр. Çапла шухăшлать паян кашни совет çынни.

Халăх çĕкленчĕ. Халăх хĕрсех çĕнтерӳ хĕçпăшалне туптать. Ферапонт Головатый панă хыпара илтсенех; пирĕн республикăри колхозниксем те танксен колоннисене тумашкăн, пирĕн паттăр летчиксем валли самолетсем илмешкĕн хăйсем çулсерен перекетлесе пынă укçи-тенкисене хывма тытăнчĕç.

Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхоз председателĕ Михаил Владимирович, Дубровин хăйĕн ывăлĕ-летчик валли самолет илме 100.000 тенкĕ парса, Сталин юлташ патне çапла çырнă:

«Манăн ывăл Дубровин Степан Михайлович, Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар Флочĕн летчикĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатать. Эпĕ, унăн ашшĕ, Дубровин Михаил Владимирович, боевой самолетсен эскадрильине тунă çĕре хутшăнса, хамăн перекетлесе хăварнă 100.000 тенкĕ укçана самолет илме паратăп.

Эпĕ илнĕ самолета хамăн ывăлăма — Степан Михайлович Дубровин летчика памашкăн мана ирĕк парăр».

Танксемпе самолетсем тума темиçе миллион тенкĕ хывасси халĕ ĕнтĕ массăллă движени пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен кашни совет çынни тăван çĕршыва хӳтĕлессине хăйĕн тăван ĕçĕ тесе шутлать. Çапла, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Васянин 100 пин тенкĕ, Пăрачкав районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри 64 çулхи колхозник, виçĕ фронтовикăн ашшĕ, Андрей Федорович Пугачев 110 пин тенкĕ хывнă.

— Манăн виçĕ ывăл фронтра, тăван çĕршыва хӳтĕлеççĕ. Эпĕ ăçтан-ха вĕсене пулăшмасăр тăрăп, — тет Пугачев юлташ.

Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз членĕ 58 çулхи Андрей Михайлович Сарсков чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ — Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов валли самолет илме 100 пин тенкĕ хывнă.

Танксемпе самолетсем тума çур миллионшар, миллионшар тенкĕ хывакан колхозсен, ялсовечĕсен хисепĕ ӳсет. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз çак ĕçе валли 500 пин тенкĕ, Шупашкар районĕнчи Заводской ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз 500 пин, ялсовечĕ пĕтĕмпе пĕр миллион ытла хывнă. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз хăй кăна 1.000.000 тенкĕ хывнă.

Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн членĕ Мария Ширманова 50 пин тенкĕ хывса, хăйĕн укçипе тунă танка хăйĕн ывăлне — Андрей Ширманов танкиста пама ыйтнă. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз членĕ С. Я. Митин — 60.000 тенкĕ, Пăрачкав районĕнчи «Трактор» колхоз членĕ Н. С. Кашечкин — 50.000 тенкĕ, Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ф. Я. Яковлев 30.000 тенкĕ хывнă. 15—20—30-шар пинĕн хывакансен списокĕ пысăк.

Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тума укçа пухас тĕлĕшпе халиччен пекех Улатăр, Вăрнар, Шупашкар, Калинино, Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Чкаловски районсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ кашниех 2—2,5 миллионран ытларах пухнă. Асăннă районсенче Ферапонт Головатыйăн тата унăн пуçарăвне малалла илсе пыракансен Дубровин, Васянин, Пугачев, Сарсков тата ытти колхозниксен примерĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Чаплă патриотсен ĕçĕ пĕтĕм колхозниксене хавхалантарать. Пирĕн колхозниксем тăван çĕршывшăн, тăван Хĕрлĕ Çаршăн нимĕн те хĕрхенсе тăмаççĕ. Халăхăн пуçарулăхĕ пысăк, ăна хускатса яни, пуçарса пыни кирлĕ.

Анчах çакна ăна хăшпĕр районсенче, сăмахран, Шăмăршă, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Шăхасан, Сĕнтĕр, Йĕпреç районĕсенче халĕ те кирлĕ пек ăнланса илмен сисĕнет. Асăннă районсенчи хăшпĕр колхозсенче Головатый колхозникăн чаплă ĕçĕ çинчен илтмен колхозниксем те пур-ха. Çакă ĕнтĕ массăллă-ăнлантарулăх ĕç çителĕксĕррине пĕлтерет.

Совет влаçĕ ĕç хресченĕсене пуян пурнăç туса панă. Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тунă çĕре 10-шар та 100-шер пинĕн укçа-тенкĕ хывни пирĕн колхозниксен, пирĕн колхозлă ялăн хăвачĕ пысăккине пĕлтерет. Пирĕн колхозниксем, хăйсене пуян та ырă пурнăç туса панă совет влаçне хӳтĕлесе хăварас тесе, халĕ хăйсен пĕтĕм вăйне параççĕ.

Партипе совет организацийĕсен халăхăн патриотла аслă движенине ертсе пымалла. Халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар нумай фронтсенче пысăк çитĕнӳсем туни çинчен, Сталин юлташăн саламĕпе Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен ăнлантарса парса, халăхăн вăйне çĕнтерӳ тунă çĕре татах та ытларах мобилизацилемелле.

СТАЛИН ЮЛТАШĂН САЛАМĔ ÇИНЕ ОТВЕТЛЕСЕ, ПĔТĔМ ВĂЯ ФРОНТА ПУЛĂШНĂ ÇĔРЕ ПАРАР!

Мускав, ЦК ВКП(б), СТАЛИН юлташа

Сирĕн, Сталин юлташ, историллĕ докладпа тата приказпа хавхаланса, Тамбов облаçĕнчи колхозниксен патриотла ырă пуçарăвне йышăнса илсе, Чăваш Автономлă Социализмлă Совет Республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 30 миллион та 75 пин тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 1 миллион та 477 пин тенкĕ, пĕтĕмпе вара 31 миллион та 552 пин тенкĕ укçа пухрĕç. Укçа пухас ĕç малалла пырать.

ПАРТИН ЧĂВАШ ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔ И. ЧАРЫКОВ.

Шупашкар, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарьне ЧАРЫКОВ юлташа

Чăваш Автономлă Социализмлă Совет Республикинчи колхозниксене, колхозницăсене тата трактористсене, танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума 31 миллион та 552 пин тенкĕ укçа пухнăскерсене, — манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, И. В. СТАЛИН юлташа

Хăйсем перекетлесе хăварнă укçа-тенке Хĕрлĕ Çар фондне панă чылай облаçсен колхозникĕсене Эсир саламлани çине ответлесе, пирĕн артельри колхозниксем танксем тума 500 пин тенкĕ укçа пама йышăнчĕç. Çак укçана пĕтĕмпех пухса Банка хывнă. Пирĕн колхозра 90 хуçалăх. Пирĕн 1.000 тенкĕрен каярах панă пĕр колхозник та çук. Танксенчен пĕрне колхозниксем «Молотов ячĕпе тăракан колхозăн танкĕ» тесе ят пама ыйтаççĕ.

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ ЗАВОДСКОЙ ЯЛСОВЕТĔНЧИ МОЛОТОВ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗĂН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ГАВРИЛОВ.

Шупашкар районĕнчи Заводской ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз

Колхоз председательне ГАВРИЛОВ юлташа

Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсене, танксен колоннисене тума укçа пухнăскерсене, — манран салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, Эсир Тамбов облаçĕнчи колхозниксене саламлани çине ответлесе, виçĕ кун хушшинче танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 500 пин тенкĕ пухса укçине Госбанка хыврĕç.

Эпĕ, çав колхозăн председателĕ, хамăн перекетлесе хăварнă 100 пин тенкĕ укçана Госбанка патăм. Пирĕн колхоз тата колхозниксем государствăна тырпул, аш-какай тата ытти продуктсене те 1942 çулшăн пĕтĕмпех парса татрĕç, 1943 çулхи çураки валли вăрлăхсене хывса пĕтĕмĕшпех тасатса хучĕç, 1943 çул шучĕпе государствăна 300 пăт какай тата 3.500 пăт тырă пачĕç.

Эпир Сана, хаклă Сталин юлташ, çапла тупа тăватпăр: хамăрăн Хĕрлĕ Çар валли эпир нимĕн те шеллемĕпĕр, хамăрăн юратнă тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăя, кирлех пулсан, пурнăçа та парăпăр.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ВĂРНАР РАЙОНĔНЧИ КОЛЬЦОВКĂРИ ЛЕНИН ОРДЕНЛĔ, СТАЛИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ВАСЯНИН.

Мускав, ЦК ВКП(б)

Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

Тамбов облаçĕнчи колхозниксен тата Ферапонт Петрович Головатый колхозникăн ырă примерне йышăнса илсе, эпĕ, гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç фронтра кĕрешекен икĕ ывăлăн 58 çулти ашшĕ, хам перекетлесе хăварнă 100 пин тенкĕ укçана самолет илме паратăп тата Сирĕнтен, Сталин юлташ, çав самолета Совет Союзĕн Геройĕсенчен пĕрне—Федот Никитич Орлова памашкăн ирĕк пама ыйтатăп.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ УЛАТĂР РАЙОНĔНЧИ «КРАСНЫЙ ЛУЧ» КОЛХОЗ.

АНДРЕЙ МИХАЙЛОВИЧ САРСКОВ.

Мускав, Кремль,

Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

Манăн ывăл, Дубровин Степан Михайлович, Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар Флочĕн летчикĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатать. Эпĕ, унăн ашшĕ, Дубровин Михаил Владимирович, боевой самолетсен эскадрильйине тунă çĕре хутшăнса, хамăн перекетлесе хăварнă 100 пин тенкĕ укçана самолет илме паратăп.

Эпĕ илнĕ самолета хамăн ывăлăма — Степан Михайлович Дубровин летчика памашкăн мана ирĕк парăр.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔНЧИ «КРАСНЫЙ ПАХАРЬ» КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ

ДУБРОВИН МИХАИЛ ВЛАДИМИРОВИЧ.

Мускав, Кремль, СТАЛИН юлташа

Чăваш республикинчи Улатăр районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, Сирĕн, Сталин юлташ, историллĕ докладпа тата приказпа хавхаланса, нимĕç пусмăрçисене çĕнтерес кăмăлпа çунса, хăйсем ĕçлесе илнĕ тата перекетлесе хăварнă 2 миллион та 550 пин тенкĕ укçана танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума пачĕç.

Совет влаçĕ колхозниксене телейлĕ те тулăх пурнăç пачĕ. Улатăр районĕнчи колхозниксем, хамăр çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тата унтан фашистла мерзавецсене хăваласа кăларас тесе, хăйсен вăйне те тата укçи-тенкине те шеллемĕç.

Укçа парас ĕç малалла пырать.

ПАРТИН УЛАТĂР РАЙКОМĔН СЕКРЕТАРĔ КИРЕЕВ.

Район 2.272.000 тенкĕ пухнă

А. Пугачев—110 пин, М. Ширманова—50 пин, С. Пиняев—20 пин тенкĕ хывнă

ПĂРАЧКАВ, декабрĕн 28-мĕшĕ (ТЕЛЕФОНПА). Тăван çĕршывăн патриочĕ — колхозник Ферапонт Головатый примерне йышăнакансем районра кунсерен хутшăнса пыраççĕ. Дубровинпа Кашечкин юлташсем хыççăн 64 çулхи колхозник Андрей Федорович Пугачев танксен колоннине тума 110.000 тенкĕ пачĕ.

Пугачев юлташ — Молотов ячĕпе тăракан колхозран. Унăн виçĕ ывăлĕ — фронтра.

— Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре ывăлăмсем хăйсен пурнăçне те шеллемеççĕ пулсан, хам эпĕ укçана шеллем мар, — тет вăл.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕ Мария Филипповна Ширманова юлташ 50 пин тенкĕ хывнă. Çак укçапа тунă танка вăл хăйĕн Хĕрлĕ Çарти ывăлне Андрей танкиста пама ыйтать.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума çавăн пекех «Парижская Коммуна» колхоз председателĕ С. Пиняев юлташ 20 пин тенкĕ, «Восход» колхоз председателĕ Ф. Тихонов юлташ 15 пин тенкĕ, «Новый путь» колхоз председателĕ Н. Дыдычкин юлташ 15 пин тенкĕ хывнă.

Паянхи кун тĕлне район пĕтĕмпе 2.272.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2.083.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине тума 89 пин тенкĕ тата Совет Союзĕн геройĕ капитан Орлов валли самолет тума 100 пин тенкĕ хывнă.

Укçа пухас ĕç сарăлсах пырать.

А. РОМАНОВ,
ВКП(б) РАЙКОМĔН СЕКРЕТАРĔ.

Боевой машинăсем тума

Колхоз председателĕ Ф. Яковлев 30 пин тенкĕ панă

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри колхозниксем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, боевой машинăсем тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Егоркинăри «Большевик» колхоз членĕсем кĕске вăхăт хушшинчех танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 75 пин тенкĕ пухса пачĕç. Кунта танксен колоннине тума кашни колхозник 1—5-шер пин тенкĕ панă. 60 çулхи колхозник Василий Клочков танксен колоннине тума 15 пин тенкĕ пачĕ.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума Пояндайкинăри «Новая жизнь» колхоз членĕсем те 100 пин тенкĕ пухнă. «Новая жизнь», Буденный ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем Матвеевпа Ефатеров юлташсем танксен колоннине тума 15-шер пин тенкĕ панă.

— Манăн икĕ ывăл фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Вĕсене эпĕ кулленхи тимлĕ ĕçпе пулăшса тăратăп. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума эпĕ тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тунă хамăн 30 пин тенкĕ укçана паратăм. Колхозниксен укçипе тунă танксем тăшмана хăватлăн çĕмĕрччĕр, — тет Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Федор Яковлевич Яковлев юлташ.

Хар. ЛИСИН.

ВКП(б) ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ПЛЕНУМĔ

Декабрĕн 26-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XIX-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту: парти Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен тата ВЛКСМ хула комитечĕн ĕçĕсем çинчен сӳтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад турĕ. Доклада сӳтсе-явнă çĕре Плетнева (хула Совечĕн исполкомĕ), Соколов (леспромхоз), Кузнецова (хула Совет исполкомĕн çĕрĕç отделĕ), Григорьев (промкомбинат), Климов (хула Совечĕн исполкомĕ), Воротилов (промсоюз), Каплин, Поддубко юлташсем хутшăнчĕç.

Пленум вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен хулари чылай предприятийĕсем, уйрăмах промкомбинат, «Металлист», «Вышивка» артельсем начар ĕçленине палăртрĕ. Чылай предприятисемпе артельсен руководителĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене сирнĕ çĕрте хăйсен тимлĕхĕпе пуçарулăхне кăтартмаççĕ, вырăнти чĕртаварсен ресурсĕсемпе туллин усă курмаççĕ. Фабрикăсемпе заводсенчи производствăран юлнă япаласемпе те çителĕксĕр усă кураççĕ. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин руководителĕсем ĕçе организацилессишĕн, кадрсем хатĕрлессишĕн, хĕрарăмсене производствăна явăçтарассишĕн, çавăн пекех рабочисене ĕçлеме юрăхлă условисем туса парассишĕн сахал тăрăшаççĕ, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсем çумĕнчи партипе комсомол организацийĕсем массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ, социализмлă ăмăртăва начар ертсе пыраççĕ.

Пленум хулари парторганизацисем вутă хатĕрлес ĕçе ертсе пырассине сӳрĕклетнине, промышленность предприятийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем çуракине начар хатĕрленнине палăртрĕ.

Хулари вырăнти промышленность, промысла кооперацин ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пленум практикăллă мероприятисем палăртрĕ. Пленум предприятисемпе артельсен руководителĕсене тата парти организацисене атă, пушмак, кĕпе-тумтир, кил-çуртра тыткаламалли ытти япаласене юсакан мастерскойсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тимлĕнрех ĕçлеме, çавăн пек мастерскойсен хисепне ӳстерме тата вĕсен ĕç пахалăхне лайăхлатма хушса хăварчĕ.

Пленум çавăн пекех предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене, парти организацийĕсене хăйсене валли вутă хатĕрлес тата турттарас ĕçе халех вăй латма, ку тĕлĕшпе панă плана срокра тултарма, топливăна усăсăр тăкаклание пĕтерме, ăна перекетлĕн тыткалама хушса хăварчĕ.

Пленум предприятисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсенче, хула çывăхĕнчи колхозсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ирттермелли мероприятисене палăртса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Охандерова юлташ доклад турĕ. Прение Иванов (ĕç резервисен Управленийĕ), Федоров (ВКПб) хула комитечĕн секретарĕ), Петрушева (Водосвет) тата Купаков юлташсем тухса калаçрĕç. ВКП(б) Обкомĕпе хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл хулари комсомолецсен черетлĕ задачисем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Хулари комсомол организацийĕн ĕçĕнчи хăшпĕр лайăх енсене ырласа, пленум пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. ВЛКСМ хула комитечĕ комсомолецсене политика енчен пăхса ӳстерес, вĕсене теорилле пĕлӳ парас ĕçсене вăйлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнман; комсомолец-агитаторсен ĕçне начар ертсе пырать; малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес, пионер организацийĕсен ĕçне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Н-ски заводри, типографинчи, тир-сăран комбинатĕнчи тата ытти предприятисенчи парти организацийĕсем комсомолецсене çаплах начар ертсе пыраççĕ-ха.

Пленум партин хула комитетне—хулари комсомол организацийĕсене ертсе пырассине вăйлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма, парторганизацисен секретарĕсене—комсомолецсем хушшинче ытларах ĕçлеме, производствăри тата учрежденисенчи çамрăксем хушшинче комсомолăн ертсе пырас рольне ӳстерме, массăллă-политикăллă, çарпа физкультура ĕçĕсенчи лайăх пуçарусене сарса пыма, социализмлă ăмăртăва организацилеме, парти пухăвĕсенче комсомол пурнăçĕн ыйтăвĕсене сӳтсе-явма хушса хăварчĕ.

Пленум çавăн пекех пуçламăш парти организацийĕсемпе ВЛКСМ хула комитетне—çамрăксем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе лайăхлатма, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне явăçтарас ĕçе вăйлатма, комсомол организацийĕсене çирĕплетсе тата йышлăлатса пыма сĕнчĕ. Пленум ВЛКСМ хула комитетне, шкулсенчи партипе комсомол организацийĕсене ВЛКСМ Центральный комитечĕн X-мĕш пленумĕн решенийĕсене пĕтĕмпех пурнăçлас, вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетес, вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлеме хушса хăварчĕ; 1943 çулхи январь уйăхĕнче комсомол организаци секретарĕсен яланах ĕçлекен семинарне организацилеме йышăнчĕ. Пленум хулари комсомол организацийĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тата ытти мероприятисене те палăртса хăварчĕ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 27-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 27-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем **Дон** шывӗн вӑтаçӗрӗнчи районра малалла наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан темиçе пункта, çав шутра **Голая, Новая, Спасовка, Трофименков, Урюпин, Ясиновка, Солонецкий** ятлӑ пысӑк пунктсене йышӑнса илнӗ.

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем, 10—15 километр малалла куçса, **Городской, Петемкинская, Сазонов, Бирюков, Дорофеевский, Водянский, Заливский, Верхне-Яблочный, Небыков, Самохин, Шарнутовский, Пимен-Черни** ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тата **Жутово, Чилеков** ятлӑ чугунçул станцийӗсене йышӑнса илнӗ. Наступлени тума пуçланӑранпа 4 кун хушшинче пирӗн войскӑсем 40—60 километр малалла кайнӑ.

Центральнӑй фронтра тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн войскӑсем наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ.

Иртнӗ эрнере, декабрӗн 20-мӗшӗпе 26-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри çапӑçусенче тата аэродромсенче нимӗçсен 176 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Çав шутран 70 транспортнӑй самолетне Сталинград районӗнче пӗтерсе тӑкнӑ. Çав вӑхӑт хушшинче пирӗн 65 самолет пӗтнӗ.

* * *

Декабрӗн 26-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 20 танкӗпе бронемашинине çити тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине çити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнӑ, 2 поезда çӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине пӗр батальона çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаçнӑ районӗнче пирӗн войскӑсем, ӑнӑçлӑн наступлениллӗ çапӑçусем туса пырса, противникран темиçе çурта тата вуншар дзотпа блиндажа тытса илнӗ. Нимӗçсен 200 салтакӗпе офицерне ытла, 3 орудине тата 8 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Хулан кӑнтӑр хӗрринче пирӗн артиллери минометсен 3 батарейине тата противникӑн 8 огневой точкине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем хӑйсен рубежӗсене тӗрэклетнӗ тата тӑшманӑн позицийӗсем çине персе тӑнӑ. Нимӗçсен 24 дзотне тата 4 наблюдательнӑй пунктне ишӗлтернӗ. Пӗр участокра Совет боецӗсем гитлеровецсен атакине сирсе янӑ, нимӗçсен 3 танкне тата 160 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнӗ тата трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре совет войскисем противник хирӗç тӑнине сирсе ярса, малалла наступлени туса пынӑ, вӗсем халӑх пурӑнакан темиçе пункта йышӑнса илнӗ. Тӑшман питӗ пысӑк çухатусем тӳсет. Тыткӑна лекнӗ нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсем çапла каласа панӑ: нимӗçсен 23-мӗш танковӑй дивизийӗ юлашки çапӑçусенче хӑйӗн хӗçпӑшалӗсене пурне те тенӗ пекех тата хӑйӗн çын йышӗн виç пайӗнчен икӗ пайне ытла çухатнӑ. Кун каçа, туллимар даннӑйсем тӑрӑх, пирӗн войскӑсем нимӗçсен 23 танкне, 18 орудине, 9 самолетне, 60 автомашинине тата 2.500 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Кун каçа нимӗçсенчен 55 оруди, 25 миномет, 390 винтовка, 65 автомашина, боеприпассен 2 складне тытса илнӗ тата темиçе çӗр çынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Дон шывӗн вӑтаçӗрӗнчи районра пирӗн войскӑсем ӑнӑçлӑн наступлени туса пынӑ. Руссиянов юлташ ертсе пыракан боецсем икӗ кун хушшинче халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла ирӗке кӑларнӑ, тӑшманӑн 3,000 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ тата 1,700 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. 3 танк, 58 оруди, 67 пулемет, 14 миномет, 30 автомашина, 120 ещӗк снаряд тата ытти тӗрлӗ пурлӑхпа хӗçпӑшалсем тытса илнӗ. Халӑх пурӑнакан пӗр пунктшӑн пынӑ çапӑçура Крицкий лейтенант ертсе пыракан танк экипажӗ хӑйне уйрӑмах палӑртнӑ. Халӑх пурӑнакан çав пункт патне пымалли вырӑнсенчи нимӗçсем противотанковӑй орудисем нумай вырӑнаçтарса лартнӑ пулнӑ. Совет танкисчӗсем противник тӑракан вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та, орудисемпе тата пулеметсемпе персе, 100 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ тата противникӑн контратакисене сирсе тӑнӑ. Великие Луки районӗнче Дьяконов юлташ командир пулса тӑракан чаçӑн боецӗсем противник хирӗç тӑнине сирсе янӑ та унӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ хирӗç тӑмалли узелне тытса илнӗ. Нимӗçсем, хӑйсен позицийӗсене каялла илес тесе, пирӗн подразделенисене хирӗç контратака тунӑ. Совет боецӗсем нимӗçсен 6 контратакине сирсе янӑ, противника халран янӑ, унтан вара хӑйсем наступлени тума пуçланӑ та халӑх пурӑнакан темиçе пункта тытса илнӗ. Çав çапӑçусенче гитлеровецсем пысӑк çухатусем тӳснӗ. Тепӗр участокра нимӗçсем халӑх пурӑнакан пысӑк пунктра çавӑрса илнӗ хӑйсен гарнизонне валли парашютпа боеприпассем пӑрахнӑ. Çав пӑрахнӑ грузӑн пысӑк пайӗ пирӗн чаçсем йышӑннӑ территори çине ӳкнӗ. Çав районрах пирӗн зенитнӑй артиллери нимӗçсен 6 самолетне персе ӳкернӗ.

Ржевран хӗвеланӑçнерехри районра противникӑн пехотнӑй полкӗ, танксем пулӑшса пынипе, нумаях пулмасть пирӗн войскӑсем тытса илнӗ пункта атакӑланӑ. Хаяр çапӑçура тӑшманӑн полкӗ хӑйӗн йышӗн 40 процентне çухатнӑ та каялла чакнӑ. Нимӗç полкӗн командирне те вӗлернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн войскӑсем наступлени туса пынӑ. Вӑйлӑ тӗтре тата çумӑрсем пулӑ çулсем пӑсӑлни совет чаçӗсене малалла куçса пыма кансӗрленӗ. Апла пулсан та Н-ски чаçӑн боецӗсем, тӑшман хирӗç тӑнине сирсе ярса, халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пункта вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем чугунçул станцине илнӗ, нимӗçсем ӑна тӗреклетнӗ опорнӑй пункт туса хунӑ пулнӑ. Пирӗннисем 4 паровоз, 17 вагон, 8 танк, 150 бензин бакӗ, 100 километр тӑршшӗ ытла телефон кабелӗ тата боеприпассен складӗсене тытса илнӗ. 600 гитлеровеца çити пӗтерсе тӑкнӑ. Шелэстовпа Галкин лейтенантсем ертсе пыракан подразделенисем штык вӗççӗн тӑрса çапӑçса 70 гитлеровеца вӗлернӗ, 3 противотанковӑй оруди, 5 пулемет тата 15 пин патрон тытса илнӗ. Пирӗн боецсем нимӗç окопӗсемпе блиндажӗсенче хӗрарӑм пушмакӗсем, одеалсем тата ытти япаласем нумай тупнӑ, вӗсене гитлерла çаратуçӑсем вырӑнти çынсенчен—осетинсенчен çаратса илнӗ пулнӑ.

* * *

Вилейски облаçра (Белоруссия) кӗрешекен партизансен отрячӗ противникӑн 5 çар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ, шоссе çулӗ çинчи 6 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, 1.000 ытла нимӗç салтакӗпе офицерне, çав шутра Вилейски жандармерин начальникне Криля вӗлернӗ. Унсӑр пуçне, партизансем çӗнӗрен çуралса тухнӑ 18 нимӗç помещикӗн, Германирен пырса хресчен çӗрӗсене туртса илнӗскерсен, имени́йӗсене çунтарса янӑ. Вилейка облаçӗнчи партизансен тепӗр отрячӗ нимӗçсен 3 казармине вӗсенче пурӑннӑ гитлеровецсемпе пӗрлех сирпӗнтерсе янӑ тата нимӗçсен фашистла оккупанчӗсен продовольстви складне çунтарса янӑ.

Декабрӗн 28-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 28-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскӑсем **Сталинград** районӗнче, **Центральнӑй** фронтра, **Дон** шывӗн вӑтаçӗрӗнчи районра тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре малтанхи еннеллех наступлениллӗ çапӑçусем туса пынӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаçнӑ районӗнче пирӗн штурмлакан группӑсем противникӑн опорнӑй пунктне тата темиçе дзочӗпе блиндажне йышӑнса илнӗ. Нимӗç пехотине пӗр ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре Н-ски часть тактика енчен паха пулса тӑракан высотана йышӑнса илнӗ. Противник хӑйӗн çухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илес тесе икӗ хут контратака тунӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсене сирсе янӑ, тӑшманӑн 200 салтакне çити пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗçсен 9 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ. Совет летчикӗсем сывлӑшри çапӑçусенче противникӑн 7 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем ӑнӑçлӑн наступлени туса пынӑ. Совет подразделенийӗсем тӑшмана канма памасӑр çӗрле малалла куçса пынӑ. Пӗр участокра противник пехоти танксем пулӑшнипе контратака тунӑ. Хаяр çапӑçура пирӗн боецсем противника çапса аркатса, нимӗçсен 600 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, 8 танкне çунтарса янӑ, 3 орудине, 11 пулеметне тата боеприпассем тиенӗ 14 автомашинине тытса илнӗ.

* * *

Дон шывӗн вӑтаçӗрӗнчи районра пирӗн войскӑсем, противник хирӗç тӑнине сирсе ярса, малалла наступлени туса пынӑ. Н-ски чаçӑн танкисчӗсем тӑшман оборонин опорнӑй пунктне аркатса тӑкса, нимӗçсен 400 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 26 оруди, 22 пулемет, 19 автомашина, продовольствин 2 складне тата боеприпассен складне тытса илнӗ. Н-ски стрелковӑй чаçӑн участокӗнче пирӗн боецсем гитлеровецсен контратакине сирсе янӑ, гитлеровецсене пысӑк çухату тӳстернӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилли ытла тата çунса кайнӑ 7 танкӗ выртса юлнӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсен пӗр пайӗ активлӑн кӗрешнӗ. Великие Луки районӗнче Н-ски чаçӑн боецӗсем, малалла куçса, халӑх пурӑнакан 4 пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗç командованийӗ хӑйӗн салтакӗсене ӑнӑçусӑр контратакӑсене кӗрте-кӗрте ярать. Ӗнерхи кун гитлеровецсем Ларцев юлташ ертсе пыракан подразделение хирӗç 7 хутчен контратака тунӑ. Противник хӑйӗн 300 салтакӗпе офицерне çити тата 3 танкне çухатсан, хӑйӗн малтанхи позицийӗсем патне чакнӑ.

Ржевран хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем противникӑн 13 дзотне тата 19 блиндажне ишӗлтернӗ, нимӗçсен 200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн войскӑсем хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн халӑх пурӑнакан пысӑк пункта йышӑнса илнӗ тата противника темиçе высота çинчен хӑваласа янӑ. Нимӗçсем пысӑк çухатусем тӳсеççӗ. Пӗр высотӑшӑн пынӑ çапӑçусенче кӑна Н-ски чаçӑн боецӗсем тӑшманӑн 400 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ. Тепӗр участокра гварди старши сержанчӗ Иваненко ертсе пыракан разведчиксен группи противник йышӑннӑ яла çӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ та 60 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград облаçӗнчи партизансен отрячӗ, нимӗç захватчикӗсемпе çапӑçса, тӑшманӑн 111 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Çав отрядри боецсем противникӑн 2 поездне крушени тунӑ. Крушенипе пула 2 паровоз тата çар грузӗсем тиенӗ 20 вагонпа платформа çӗмӗрӗлнӗ. Кунсӑр пуçне, совет патриочӗсем çулсем çинче 7 грузовой тата 4 çӑмӑл автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Берлинри радио декабрӗн 7-мӗшӗнче çапла пӗлтернӗ: «Воронежран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата Калугӑран хӗвеланӑçнерехре нимӗç войскисем темиçе ӑнӑçлӑ атака тунӑ. Совет войскисем сынпа çар материалӗсем тӗлӗшӗнчен пысӑк çухатусем тӳснӗ», тенӗ. Гитлеровецсем çапла пӗлтернӗ май пирӗн çакна каламалла: Воронежран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре те, Калугӑран хӗвеланӑçнерехре те нимӗç войскисем нимӗнле атака та—ӑнӑçлисене те, ӑнӑçсӑррисене те—туман. Фронтӑн Воронежран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехри участокӗнче нумай вӑхӑт хушши ӗнтӗ лӑпкӑ тӑрать. Калугӑран хӗвеланӑçнерехри атакӑсем çинчен калани кулӑшла япала, мӗншӗн тесессӗн Калуга тахçантанпах ӗнтӗ совет войскисен тылӗнче ларать.

Воронеж районӗнче тата Калуга районӗнче нимӗçсем «ӑнӑçлӑн» атакӑсем тунӑ тесе халлап ярса гитлеровецсем Германири халӑхӑн шухӑшне Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтӑн йышлӑ участокӗсенчен, чӑнах та вӑйлӑ çапӑçусем пыракан участокӗсенчен, нимӗçсен фашистла войскисем çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен питех те пысӑк çухатусем тӳссе пӗр йӗркесӗр каялла чакакан участокӗсенчен пӑрса ярасшӑн. Дон шывӗн вӑтаçӗрӗнчи районра кӑна Хӗрлӗ Çар 10 кун хушшинче нимӗçсен фашистла захватчикӗсене халӑх пурӑнакан 812 пунктран хӑваласа кӑларнӑ тата 56.000 çынна тыткӑна илнӗ. Çакӑн çинчен нимӗçсен информаци бюровӗ шарламасть. Ун вырӑнне фашистла карма-çӑварсем нимӗç войскисен туман атакисем çинчен тем пэк мухтаса çыраççӗ. Гитлеровецсен вӗсен йӗркипе çавӑн пек ӗнтӗ: вӗсене мӗн чухлӗ вӑйлӑрах çапаççӗ—çавӑн чухлӗ вӗсем ытларах суяççӗ, хӑйсен тӗнчере пулман ӑнӑçӑвӗсем çинчен çавӑн чухлӗ хытӑрах кӑшкӑраççӗ.

Государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ

СОВЕТСКОЕ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). ВКП(б) райкомӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, район 1942 çулта государствӑна тырӑ памалли плана декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне пурнӑçларӗ. Обязательнӑй йӗркепе тырӑ памалли плана 316 центнер ирттерсе тултарнӑ, МТС панӑ счетсем тӑрӑх натуроплата тыррине пӗтӗмӗшпех парса татнӑ. Çапла районри колхозсем кӑçал государствӑна пурӗ 24.336 центнер тырӑ панӑ.

Анчах МТС машинисемпе ӗçлес плана район тултарман: Çакӑ вӑл Советски районри колхозсенче ӗçлеме тивӗçлӗ МТС-сем хӑйсен ӗç планне пурнӑçа кӗртсе пыманнинчен килнӗ. Тракторпа ӗçлемелли плана тултарассишӗн кӗрешме халӗ те май пур. Районри колхозсенче çапса пуçтарман тырӑ татах 852 гектар. Анчах авӑн çапас ӗçре халь тракторлӑ молотилкӑсем пачах ӗçлемеççӗ.

Çитес çулхи вӑйлӑ тырпулшӑн

КАЛИНИНО. (Хамӑр корр.). Кӑмпалти «Çӗнӗ çул» колхоз кӑçал тырпул тухӑçне ӳстермелли плана пур культурӑсем тӑрӑх та тултарнӑ. Кашни гектартан вӑтам шутпа сӗлӗ 17 центнер, пӑри 15 центнер, вӑрлӑхлӑх вика 14 центнер, тулӑ 12 центнер, махорка 20 центнер туса илнӗ.

Пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илесси, паллах, колхозниксемпе колхозницӑсем уйхир ӗçӗсене пысӑк хастарлӑхпа туниччен нумай килнӗ. Çуракипе уборка вӑхӑтӗнче нумай колхозниксем ырми-канми ӗçлесе стахановецсен ретне тӑчӗç. Стахановла тӗслӗхсем кӑтартса ӗçлекен колхозниксен хисепӗ 41 çынна çитнӗ. Вӗсен пархатарлӑ ӗçне пула колхоз кӑçал уйхир ӗçӗсене кӗске вӑхӑтра вӗçлэме пултарчӗ, государствӑна тырӑ, техникӑллӑ культурӑсем хӑвӑрт парса татрӗ.

Халӗ, ялхуçалӑх çулӗнчи ӗçсене вӗçленӗ хыççӑн, колхоз тупӑш валеçме хатӗрленет. Колхозниксэн ӗçкунӗ çине кӑçал 4-шар килограмм тӗштырӑ валеçӗнет. Çапла, стахановла ӗçлесе 270—300-шер ӗçкунӗ тунӑ К. Ефимова, А. Ксенофонтова, К. Архипова, Е. Петрова тата ытти нумай колхозницӑсем вӑтамран 70-шер пӑт тырӑ илеççӗ.

Кӑçал тунӑ çитӗнӳсене çирӗплетсе, колхоз 1943 çулхи çуракине хатӗрленме тытӑнчӗ. Килэс çулта тырпул тухӑçне татах та вӑйлӑн ӳстересси колхозниксен куллен туса пымалли тӗп задачи пулса тӑчӗ. Колхозниксем вӑрлӑхлӑх тырӑсене сортлаççӗ, тислӗк кӑлараççӗ, минераллӑ удобрени турттараççӗ. 40 центнер вӑрлӑхлӑх пӑрçана алӑ вӗççӗн пӗрчӗн тасатса хунӑ, çак кунсенче уя 440 лав тислӗк кӑларнӑ, 15 центнер кали тӑварӗ турттарса килнӗ, 24 центнер кӗл, 3 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ.

Анчах, калас пулать, колхоз çуракинче ӗçлемелли машинӑсене, транспорт инвентарӗсене юсама тытӑнман-ха. Плугсем, сеялкӑсем, сӳресем тата урапасемпе ридвансем те юсавлӑ мар, тата вӗсене тӗплӗн пуçтарса та кӗртмен. Колхозӑн ку ӗçе те халех йӗркелемелле, çуракине пысӑк пахалӑхпа туса ирттерме тӗплӗн хатӗрленмелле.

С. ШАДИН.

Эпӗ агитаци ӗçне мӗнле туса пыратӑп

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Эпӗ — Янкассинчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри агитатор. Малтанхи вӑхӑтра агитаци тунӑ чухне эпӗ йывӑрлӑхсем туяттӑм. Çавӑн пирки мана хаçат-журналсемпе кӗнекесем нумай вулама тиврӗ. Хаçат-журналсемпе кӗнекесем вулани тата колхозниксемпе нумайтарах курса калаçни мана агитаци ӗçне хӑнӑхтарчӗ.

Лайӑх агитатор пулас тесен, кашни агитаторӑн хӑйӗн вӗренмелле. Çакна эпӗ яланах асра тытатӑп. Колхозниксем хушшинче агитаци ӗçне тунипе пӗрлех хамӑн пӗлӗве ӳстерсе пыратӑп. Манӑн хамӑн библиотека пур тата кирлӗрех кӗнекесене эпӗ ытти библиотекӑсенчен илетӗп. Кӗнекепе сэс агитаци тума çук, çавӑнпа эпӗ «Чӑваш Коммуни», «Красная Чувашия», «Октябрь ялавӗ» хаçатсене пӗр сиктермесӗр вуласа тӑратӑп.

Агитаци тунӑ çӗрте парти историне пӗлни питӗ кирлӗ, çавӑнпа эпӗ парти историне «ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ» тӑрӑх кулленех вӗренсе пыратӑп. Эпӗ колхозниксемпе колхозницӑсене тӑван çӗршывпа Хӗрлӗ Çара вӑйлӑн пулӑшса тӑмалли çинчен ӑнлантарнипе пӗрлех, гитлеровецсем тыткӑна лэкнӗ пирӗн боецсемпе фронт çывӑхӗнчи облаçсенчи колхозниксене асаплантарни, ирӗксӗрлесе çакса вӗлерни çинчен, халӗ Центральнӑй фронтра тата Сталинград районӗнче Хӗрлӗ Çар наступлениллӗ хаяр çапӑçусем туса пыни çинчен тӗплӗн каласа паратӑп. Хамӑн сӑмахӑмсем витӗмлӗ те лайӑх ӑнланмалла пулччӑр тесе, хаçатсем çинчен уйрӑм статьясене, Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене вуласа кӑтартатӑп.

Манӑн малашнехи ӗмӗт—лайӑх агитатор пуласси, колхозра лайӑх ӗçлесси тата колхозниксене фронтпа тӑван çӗршыва пулӑшнӑ çӗре мобилизацилесси.

Фронтран аманса таврӑннӑ красноармеец-агитатор **Н. ВИНОГРАДОВ.**

Федякинецсен пуçарӑвӗ тӑрӑх

Рязань облаçӗнчи Федякино шкулӗнчи педагогсемпе Киров ячӗпе тӑракан колхоз членӗсэм шкулсемшӗн тӑрӑшас тӗлӗшпе лайӑх пуçару пачӗç. Федякинецсен пуçарӑвне Сут-Кӳлри пуçламӑш шкулти учительсемпе «Восход» колхозӑн активисчӗсем те кӑмӑлласа йышӑнчӗç. Кунта вӗренекенсене кашни кунах вӗри апат çитереççӗ. Фронтовиксен тумтирсем çителӗксӗр ачисене валли тумтирсэм илсе пама палӑртнӑ. Шкулшӑн тӑрӑшас ӗçре колхоз председателӗ Г. Васильев, фронтран аманса килнӗскер, лайӑх пример кӑтартрӗ. Вӗри апат çитерэссине йӗркелесе янӑ хыççӑн ачасем шкула пӗр сиктермесӗр çӳрекен пулчӗç.

Я. СИГАЙ.

Ют çӗршывсенче

Англи королӗ радио тӑрӑх тухса калани

ЛОНДОН, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи королӗ Англипе Британи империйӗн халӑхне раштав çитнӗ май чӗнсе каланӑ, вӑл çапла каланӑ:

«Пӗрлешнӗ нацисем юлашки вӑхӑтра тунӑ çӗнтерӳсем мана çак раштав умӗн малашлӑх çине хытӑ шанса калама май параççӗ. Вӑтаçӗр тинӗсӗн кӑнтӑр çыранӗнче пӗрремӗшпе 8-мӗш армисем тата пирӗн флотпа авиаци пӗр-пӗрин патне çывӑхарса пыраççӗ, вӗсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен вӑхӑтра пырса çитнӗ экспедицилӗ хӑватлӑ вӑйӗсемпе хавхаланнӑ тата хытӑ вӑйлӑланнӑ. Совет Союзӗн армийӗсем противника калама çук хытӑ пыра-пыра çапрӗç, çапла пырса çапнисем Германи халӑхӗн шухӑш кӑмӑлне мӗн тери вӑйлӑн пӑсса янине те йывӑр. Пирӗн Австралири тата Америкӑри юлташсем Лӑпкӑ океанра противника хирӗç пыра-пыра çапнине эпир тимлӗн пӑхса асӑрхаса тӑратпӑр. Инди, халӗ те Япония пырса кӗрес хӑрушлӑхра тӑраканскер, Инди çӗрне Англи çарӗсемпе пӗрле хӳтӗлеме хатӗр тӑракан миллион ытла боец тупрӗ. Пирӗн умра эпир татса панӑ задачӑсенчен йывӑртарах задачӑсем тӑраççӗ пулмалла. Эпир вӗсене пурнӑçлама хамӑрӑн ӗç ӑнӑçассине ӗненсе хатӗрленетпӗр, мӗншӗн тесессӗн халӗ ӗнтӗ эпир пӗччен мар, эпир начар хӗçпӑшалланнӑ çӗршыв мар ӗнтӗ, эпир кирек мӗн пулсан та хамӑр обязанноçсене пурнӑçлама çак йывӑр кунсенчи пекех хатӗр тӑратпӑр».

Албанири партизанла движени

АНКАРА, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Албани халӑхӗн хӑйне ирӗке кӑларасшӑн пыракан кӗрешӗвӗ сарӑлнӑ çемӗн сарӑлса пырать. Ноябрӗн 28-мӗшне — Албания никама пӑхӑнмасӑр пурӑнма пуçлани 30 çул тултарнӑ куна — оккупантсем «Итали халӑхӗпе Албани халӑхӗ пӗрлешеççӗ» тенӗ лозунгпа ирттерме шутланӑ. Фашистсен çак хӑтланӑвӗ пӗтсе ларнӑ. Албани патриочӗсем, Албание Италия оккупациленине хирӗçлесе, ноябрӗн 28-мӗшне нацин хуйхӑллӑ кунӗ тесе пӗлтернӗ.

Çав кун Тиранӑра, Корицӑра, Скутарире тата Валонӑра итальянецсен полицийӗпе тата войскисемпе вӑйлӑн тытӑçа-тытӑçа илнӗ. Темиçе итальянец офицерне тата пӗр генерала вӗлернӗ, çав генералӑн ятне итальянецсем халь пытарса усраççӗ. Демонстрантсем çуртсен стенисем çинчен Итали флагӗсене иле-иле пӑрахса, вӗсем вырӑнне Албанин наци ялавӗсене тӑрата-тӑрата лартнӑ. Халӑх çав тери хытӑ çилленсе кайнипе итальянецсен хӑйсен фашистла флагӗсене пуçтарса илмелле пулнӑ.

Партизансем оккупантсенчен ирӗке кӑларнӑ территорие кунсеренех сарса пыраççӗ. Патриотсем Курбелеш, Мартанеш тата Скрапар районӗсене оккупантсенчен пӗтӗмпех тасатнӑ. Çав виçӗ облаçа партизансен влаçӗсем тытса тӑраççӗ. Партизанла движени ӳссе пыни итальянец салтакӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсене пӑсса пырать. (Албанире итальянец салтакӗсем 80—100 пин çын шутланаççӗ). Итальянец чаçӗсенче уççӑнах бунтсем туни те пулнӑ. Дураццора декабрӗн малтанхи кунӗсенче итальянецсен пӗр батальонне пӗтӗмпех хӗçпӑшалсӑрлатнӑ та хуралласа Италие ӑсатнӑ.

Партизансем казармӑсене час-часах пырса тапӑннӑ пирки халӗ вӗсенче çӗрле кашни гарнизонри салтаксенчен виçӗ пайӗнчен икӗ пайӗ хурална тӑрать.

ИТАЛИ ПРОМЫШЛЕННОÇӖ АРКАНАТЬ

ЛОНДОН (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат çапла пӗлтерет: Англи авиацийӗ пырса тапӑниччен Туринри «Фиат» завочӗсенче виçӗ смена ӗçленӗ. Халӗ çав заводсенче пӗр смена çеç ӗçлет, мӗншӗн тесессӗн рабочисем тӗптӗм пулсассӑн убежищӗсене кайма васкаççӗ. Миланрипе Генуйӑри заводсенче те çавӑн пекех пулса пырать. Фашистла влаçсем рабочисене çӗрлехи сменӑра ӗçлеме ирӗксӗр мобилизацилеме тӑрӑшни́нчен нимӗн те тухман.

ТУНИСРИ ВАРÇА ӖÇӖСЕМ

Союзниксен Çурçӗр Африкӑри вӑйӗсен командованийӗ çапла пӗлтерет: декабрӗн 24-мӗшӗнче çумӑр чӗреслетсе çунӑ пирки пысӑк ӗçсемех пулман. Фронтӑн кӑнтӑр секторӗнче те лару-тӑру лӑпкӑ тӑнӑ. (ТАСС).

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ СИРТА ЙЫШӐНСА ИЛНӖ

ЛОНДОН, декабрӗн 26-мӗшӗ (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен Триполитанире наступлени тӑвакан войскисем ӗнер кӑнтӑрла Сирта йышӑнса илнӗ, халӗ вӗсем хӗвеланӑçнелле чакса пыракан противник хыççӑнчех тӑраççӗ.

ДАРЛАНА ВӖЛЕРЕКЕНЕ ВӖЛЕРМЕЛЛЕ ТУНӐ

ЛОНДОН, декабрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçӗр Африкӑри хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗн официальнӑй пӗлтерӗвне сарать, çав пӗлтерӳре çапла каланӑ: Алжирти çар сучӗ Дарлана вӗлэрекене вӗлерме хушакан приговор йышӑннӑ.

АФИ агентстви çапла пӗлтерет: вӗлерекенӗн ятне вӑрçӑ вӑхӑтне пула пӗлтермеççӗ. Национальность енчен вӑл француз, анчах амӑшӗ унӑн итальянка. Мана пулӑшакансем пулман, тенӗ вӑл. Çав приговора паян пурнӑçа кӗртмелле.

ЖИРО ГЕНЕРАЛА ДАРЛАН ВЫРӐННЕ ЛАРТНӐ

ЛОНДОН, декабрӗн 27-мӗшӗ (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Франци владенийӗсен совечӗ (ӑна Дарлан тунӑ, унта Бержере, Жиро, Ногес генералсем, Францин Хӗвеланӑç Африкин губернаторӗ Буассон т. ыт. те кӗреççӗ). Дарлан вырӑнне Жиро генерала лартнӑ.

ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ШТАТСЕНЧЕ СТУДЕНТСЕНЕ ÇАР ӖÇНЕ ВӖРЕНТЕÇÇӖ

ВАШИНГТОН, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтернӗ: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче аслӑ шкулсенче хӗçпӑшаллӑ вӑйсем хатӗрлемелли программа çырса хатӗрленӗ. Çав программа 250 пинрен кая мар студента çар ӗçне вӗрентме май парать. Вӗсем çарпа флотри çынсем илекен шалӑвах тата çарпа флотри тумтирех илеççӗ. Çав студентсен пурин те çар дисциплинине обязательнӑй йӗркепе тытса тӑмалла пулать.

—⊙—

ХРОНИКА

ССР Союзӗн Совнаркомӗ канмалла куна 1943 çулхи январӗн 3-мӗшӗнчи вырсарникунтан 1943 çулхи январӗн 1-мӗшӗнчи эрнекуна куçармалла тунӑ, çавӑнпа январӗн 3-мӗшӗнчи вырсарникун ӗç кунӗ шутланать.

—⊙—

Пӗлтерӳ

Декабрӗн 29-мӗшӗнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртӗн ларусем туса ирттермелли залӗнче комсомол активӗ валли лекци пулать. Лекци теми:

«Совет Союзӗн вӑрçӑри тата пӗтӗм тӗнчери лару-тӑрӑвӗ».

Лекцие ЦК ВКП(б) пропгруппин членӗ **Кочнев** юлташ вулать.

Лекцие итлеме комсомол билечӗпе кӗртеççӗ.

ВКП(б) Горкомӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Трест Чувашлеспродторг приглашает на работу начальника планово-финансового отдела, старшего бухгалтера, бухгалтера-ревизора и для работы в районах старших бухгалтеров.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Урицкого, 36.

Трубочистному бюро Чебоксарского добровольно-пожарного общества требуются трубочисты. Оплата - сдельная. Предоставляется общежитие. Обращаться: г. Чебоксары, Красная площадь, дом № 33

ПРАВЛЕНИЕ ЧДПО.

Наркомпросу Чувашской АССР **срочно требуются:** бухгалтер-ревизор, экономист-плановик, кассир.

Жилплощадь предоставляется. Адрес: Чернышевская, 6.

Чувашторгу требуется бухгалтер-ревизор.

Обращаться по адресу: Чебоксары, ул. Ленина, 11.

8 декабря с/г. с базы Чебоксарской Конторы Главзаготскотцентра убежала корова.

Знающих о местонахождении ее просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Ярморочная площадь, дом № [illegible]

КОНТОРА ГЛАВЗАГОТСКОТЦЕНТРА.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11361 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 е.